к74.268.11=635.1
Ф33
4-39214

Любовь Федорова

# ПĔЛӲ ÇĂКĂР ЫЙТМАСТЬ



Национальная библиотека ЧР
4-039214

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Кдо
К 74.268.11=638.1
Ф 33

Любовь Федорова

# ПĔЛӲ ÇĂКĂР ЫЙТМАСТЬ

Литература вăййисем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2004

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2Рос=Чув)—6
Ф 33

Художникĕ
***Сергей САМСОНОВ***

ПРОВЕРЕНО
20 10

4-39214

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-7670-1328-4

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2004
© Л.М.Федорова, 2004

# ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНӐМ!

Акӑ санӑн алӑра ҫӗнӗ кӗнеке — «Пӗлӳ ҫӑкӑр ыйтмасть». Вулакан умне вӑл сӑвӑ-поэмӑпа та мар, илемлӗ хайлавсемпе те мар — чӑваш чӗлхин илемӗпе чӗрӗлӗхне туйма пулӑшакан хӑнӑхтарусемпе тухса тӑрать. Литература вӑйӑисемпе пуян пулни — акӑ унӑн хӑйне евӗрлӗхӗ.

Ку кӗнекене вырӑс шкулӗнче чӑваш чӗлхине вӗренекен тӗрлӗ ӳсӗмри ачасем валли хатӗрленӗ. Кӗҫӗн класра вӗренекенсемшӗн сӑвӑ пусӑмӗпе рифмине туйма пулӑшакан йӗркесем чылай кӗнекере. Ку вӗсен чӗлхине чылай пуянлатма пулӑшать.

Вуннӑ таран шутлама вӗреннӗ чух «Шута пӗлтерекен сӑвӑсем» ярӑмпа усӑ курни вырӑнлӑ пулӗ. Ачасене сӑвӑ састашлӑхне (рифмине) тепӗр хут туймалли, йывӑҫ, кайӑк-кӗшӗкпе ҫын ячӗсем пӗрешкел илтӗннине пӗлме май паракан тӗслӗхсем сӗнетӗп.

«Кунта мӗнле сӑмахсем пур» пай та хӑйне евӗр интереслӗ. Кӗнекере панӑ тӗслӗхсемпе пӗрлех уроксенче тата ытти сӑмахсене илме юрать. Вӗсене вӗрентекен хӑй сӗнсен лайӑхрах, мӗншӗн тесен хӑш-пӗр сӑмахсенчен ҫӗннисене йӗркелеме май ҫук.

Хире-хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене — *антонимсене* — ачасем пуҫламӑш класранах алла илеҫҫӗ. Ҫавӑнпа 1—5-мӗш классем валли антонимсемпе тӑватӑ сӑвӑ кӗртрӗм. Вӗсене пӑхмасӑр калама вӗренсен те пӑсмасть. Сӑввисем йывӑр мар, йӗркисене асра тытма ҫӑмӑл.

Вырӑс ачисем *омонимсен* — пӗр пек илтӗнекен, анчах тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем — пӗлтерӗшне контекстсӑр пӗлеймеҫҫӗ. Уҫҫи-хуппине ӑнкарма-туйма сӑвӑсем чылай пулӑшӗҫ тетӗп.

Шарадӑсемпе метаграммӑсене, логогрифсемпе анаграммӑсене 5—9-мӗш класс ачисем шӗкӗлчеҫҫӗ. Ӑнланма йывӑртарах сӑмахсене вӗренекенсем словарьпе усӑ курса вырӑсла куҫараҫҫӗ. «Кам пулас» ярӑмри сӑвӑсем аслӑ класра вӗренекенсене кӑмӑла кайнӑ професси суйласа илнӗ чух пулӑшӗҫ.

Пӗр сас паллирен пуҫланакан кӗске текстсем пирӗн чӗлхен пуянлӑхне-йышне кӑтартма кирлӗ. Ачасем чӑваш чӗлхин тӗнчи чухӑн тесе ан шутлаччӑр.

«Тупмалли юмахсем» пая тӗрлӗ классенче усӑ курма вырӑнлӑ. Пуҫламӑш классенче вӗрентекен вӗсене вырӑсла куҫарать, тупсӑмне ачасен чӑвашла каламалла. Ҫак ӗҫе пурнӑҫланӑ чух вӗренекенсене доска ҫинче тупсӑмӗсен ӳкерчӗкӗсене те тутарма юрать.

Унсӑр пуҫне кӗнекене вунӑ калав кӗртнӗ. Урокра хӑш калавӗпе ӗҫлессине вӗрентекен ачасен шайне шута илсе палӑртать. Калавсем хыҫҫӑн тӗрлӗ ӗҫсем панӑ.

Ҫак кӗнеке шкул ачисемшӗн те, тӑван чӗлхене вӗрентекенсемшӗн те чӑннипех кирлӗ те интереслӗ пуласса шансах тӑратӑп эпӗ. Ӑнӑҫу сире.

***Л.М. ФЕДОРОВА***

# ЛИТЕРАТУРА ВАЙЙИСЕМ

**Сăвă пусăмĕпе састашлăхне (ритмпа рифмăна) туймалли хăнăхтарусем.**

Ра, ра, ра, ра, ра, ра.
Витя чупрĕ ... .
*(у....ра)*

Те, те, те, те, те, те.
Ленăн пур хитре ... .
*(т.тт.)*



Ша, ша, ша, ша, ша, ша.
Сӗлӗ юрататать ... .
*(л..а)*

Чӗлхи тӑрӑх чӗр чунсен ячӗсене пӗл.

Дил-дил! — *(к.......л).*
Шимп-шимп! — *(ч.. ч...и).*
И-ха-ха! — тет *(л..а).*
Ийа-ийа! — ку *(а..к).*
Ку-ка-ре-ку! — сар *(а...н).*
Мяу-мяу! — мӗн? *(к...к).*
Мекекек! — *(к....а).*
Чак-чак-чак! — тет *(ч...к).*

Рифмӑла.

Пахчара ӳсет палан,
Вӑрманта чупать ... .
*(п...н)*

Кашласа ӳсет юман.
Пурӑнать ялта ... .
*(Ю..н)*

Çырмара вӗçет чӗкеç,
Хулара ӗçлет ... .
*(Ч...ç)*

Шурӑ юрӗ чӗлтӗр-чӗлтӗр,
Эпӗ илтӗм çӗнӗ ... .
*(й....р)*



Кĕмĕл юрĕ йăлтăр-йăлтăр,
Ӳкрĕ акă çутă ... .
*(ç....р)*

Урамра хаваслă, кур:
Çурĕ-çурĕ шурă ... .
*(ю.)*

Пирĕн аслă урамра
Кашласа ларать ... .
*(й...а)*



Числопа ҫыхӑннӑ йӗркесене вырӑсла куҫар. Вуннӑ таран шутлама вӗрен.

Каҫӑр пуҫлӑ сар автанӑн
Пӗр витре улма-ҫырла.
Килмеллеччӗ тус-тӑванӗ,
Хальлӗхе пӗччен юрлать.

Умлӑ-хыҫлӑ кимӗсем
Кӳлӗре хуллен ишеҫҫӗ.
Шыв ҫинче — кӑвакалсем.
«Иккӗ» паллӑ пек ҫӳреҫҫӗ.

Шутсӑр катӑк та илемсӗр
Кайӑк-кӗшӗк, кур, хӳресӗр.
Ӑмсанаҫҫӗ чакака
Виҫӗ пӗчӗк качака.

Тӑват пӗчӗк Упанькка —
Тӗлӗнтермӗш маттуркка:
Вут касаҫҫӗ пӗр канмасӑр, —
Ӗҫ тӑваймӑн тӑрӑшмасӑр.



Карӑнать ялан тӳр пилӗк,
Ыратать-мӗн ун ури.
Ӳтӗнче, тен, шӑрт пур-и,
Кахала лартмаҫҫӗ «пиллӗк».

Харӑссӑн ква-ква! тесе,
Савӑнса-хӗпӗртесе
Шапасем юрлаҫҫӗ улттӑн —
Тупнӑ тейӗн хаклӑ ылтӑн.

Тутлӑ пӑтӑ, винегрет
Пӗҫереҫҫӗ кӑнтӑрла.
Ҫичӗ чӑх апат ҫиет,
Хутшӑнать тата тӑрна.

Кӗп-кӗске ай сирӗн сакӑр,
Вырнаҫмашкӑн ҫук унта.
Мулкачсем халь пирӗн саккӑр,
Лартмалла пукан тата.

Эх, аван-ҫке хӑнара:
Ҫи кӑна юр-вара,
Тирӗкре — шурӑ ҫӑкӑр,
Шӑшисем пурӗ тӑххӑр.



## Хăвăрт каламаллисем.

Çемен çимен пиçене,
Çемен çинĕ иçĕме.

Курăка курать курак,
Курăк курака курмасть.

Сăмахсене хыçалтан малалла вула, вĕсене икĕ майлă та вырăсла куçар. Çак сăмахсен вăчăрине хăв тĕллĕн малалла тăс:

Кар, нарăс, уç, çук, урă, тав, тух, ĕлĕк.

Ана, ала, кĕрĕк, Анна, хĕрĕх, ара, çӳç, хух, аçа, ама, тет, аппа, ăшă, ăвă.

Пĕрешкел сыпăкран пуçланакан сăмахсен ретне малалла тăс:

Курăк, курак, купăста, куллен, купăс, кукале, кушăрха, кулать, кукамай, кукаçи, кумать, купала, кулян.

Сăмахсен варринчи пĕрешкел сыпăка туп:

Çăкăрпа, кăкăршăн, кукăра, шăнкăрав, вăкăрсăр.



Çак тĕслĕхсемпе усă курса хăв тĕллĕн пĕрешкел сас паллисемпе вĕçленекен сăмахсене шыраса туп:

Кул, мул, çул, тул, юл, сул, ил, мел, вил, кил, çил, пил, пĕл, кĕл, хĕл, шăл, ял, шел.

Кас, сас, лăс, намăс, пăс, пас, пис, сис, симĕс, тикĕс, тинĕс, тăрăс-тăрăс, парăс, пăрăс, харăс, тĕс, хĕс.

Шăнкăр-шăнкăр, чăкăр-чăкăр, çăтăр-çăтăр, чăнкăр-чăнкăр, тăнкăр-тăнкăр, лăнкăр-лăнкăр.

Кунта мĕнле сăмахсем пур?

Купăста — к., п.с, .с, ă...а, .а, п.т, у.а, у.;
Кĕрепле — к.р, е.., к.р.е, к.л;
Çуракан — çĕ, ç.р, .р, ç.ра, у.а, а., а.а, ур.к.н, к.н, р., .н, ç.к, у.у ç.р.н;
Хурăнварта — х.р, х., .р, у.ă, х.р.н, .н, в.р, .р, т., у.а, х.рта, х.рт, х.т, х.ва, х.вар;
Кăшкăркаланăшăнах — .ш, кă.а, к.ла, а.ан, к.л.нă, .н, ă.а, к.на, ан., шă.а, ăш.н, ш.н, ă., к.н, шă.ка.



Антонимсене туп.

Хура çĕр çинче
Ӳсет шурă çăкăр.
Çакна халиччен
Пĕлмен ача çук-тăр.

Çурт пулать лутра,
Çӳлли те пулать.
Çиччĕмĕш хутра
Петĕр пурăнать.

Ăшăх кӳлĕре те
Тарăн вырăн пур.
Шухăшсăр çӳретĕн —
Эс куран шар-хур.



Омонимсене шыра.

Пирĕн пĕчĕк Тимĕре
Ернĕ пулĕ тимĕре.
Унăн симĕс урине
Курнă тусĕ Урине.
Пиллĕкмĕш класри Юман
Лартрĕ пĕчĕкçĕ юман.

Пахчара тем чухлĕ тимĕр
Тупрĕ пирĕн Улатимĕр.
Мĕн-ши çакă? Шак-шак-шак!
Пĕлтĕм: Петĕр тупрĕ шак.

Коля курчĕ акă шар:
Унăн пурччĕ хĕрлĕ шар —
Шап! шаплатрĕ урамра.
Шар аванччĕ уявра.



Кăвайта хуратăп вут,
Кĕç çĕкленĕ вăйлă вут.
Хир хуралнă, тунсăх, пушă,
Шартлатмасть уйра халь пушă.

Лавккара туянтăм сăрă.
Ӳкеретĕп. Кашкăр сăрă.
Атăл тăрăх юхрĕ-юхрĕ сулă.
Пурччĕ ман çутă-çутă сулă.
Ӳкрĕ кĕмĕл тĕслĕскер çăла,
Тусăм, тупчĕ эс ăна, çăлах.

Омофон туп.

Тухтăр савăнăç та хал,
Мĕскĕн çын ан пултăр халь.
Халăх кăшкăрчĕ
«ур-ра!»,
Тапрĕ харăссăн ура.

Омографа палăрт.

Парăп акă
хулăпа.
Мĕн тăватăн
хулапа?



## Шарадăсем.

Эс тупатăн çĕрĕн пурлăхне,
Асăрхатăн унăн тутлăхне.
Шак-шак-шак! шаккатăн шав лаçра,
Аффикс ***-çĕ*** тупатăн ятăмра.
***(т.м...ĕ)***

**-çă** хушатăн ман хыçа,
Пахчара эп шав хуçа.
Темĕн чул паратăп çимĕç,
Эс мана пĕлмешкĕн тивĕç.
***(п...а.ă)***

## Метаграммăсем.

***К***-ăпалан ÿсетĕп йăшăлах,
***Ă*** сас паллине улăштарсан ***А***-па —
Кранк! кăшкăратăп пĕтĕм хаваспа.
***(к.р.к, к.р.к)***



***К***-пала куратӑн эсӗ,
Шухӑшлатӑн ***П***-пала,
Пурнӑҫ ҫук ҫынна вӗсемсӗр,
Кирлӗ иккӗш те ялан.
*(к..., п..)*

**Логогрифсем.**

**Ӑ**-пала ӳсетӗп вӑрманта,
Ҫӑтӑл-ҫӑтӑл саслӑ ҫулҫӑм манӑн.
Кӑларатӑн ***С***-на хыҫалтан —
Тӗтӗрмешкӗн кирлӗ эп, тӑванӑм.
*(ӑ..., ӑ..)*

Вӑрманта манран хӑраҫҫӗ шутсӑр:
Ӳт ӑшне кӗретӗп самантрах.
Эп поэзи хатӗрӗ пӗр ***С***-сӑр,
Ҫырӑнатӑп рифмӑпа ялан.
*(с...с, с...)*

**Анаграмма.**

Питӗ вӑрӑм урамсем...
Хӗвӗшет мӗнпур тӗлте.
Пӑтрашсан сас паллисем —
Канӑҫ вырӑн вӑл килте.
*(ху.а, у..х)*

**кёске текстсем.**

Патян Петĕрĕ паян пĕчĕк Павăлпа пĕрле Пуркка Полинисем патĕнче пакарта-пĕвер пĕçернĕ. Пăртакран Пантелей Пименĕ пĕр пысăк пăру пĕççине пырса панă. Пускилсен Петĕрĕпе Павăл пĕлĕшĕсем пуçтарăнса пакартапа пĕвере, пăру пĕççине пĕр паврамасăр пĕтĕрнĕ.

Тихăн тете тăхăр тилĕ тытнă, тăххăрĕшĕ тăвансене тивĕçнĕ. Тăванĕсем тилĕ тирĕнчен тăлăп тунă.

Турăха тутлă тăваççĕ. Тин тунă турăха тĕпсакайĕнче тытаççĕ. Тĕпсакайĕнче тытмасан — тутлăмарланать. Турăха тутлă тума тăрăшăр, тăвансем.



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ
Ч-39214

## Тупмалли юмахсем.

Питĕ-питĕ хытăскер.
Тук-тук-тук! Тук-тук-тук!
Кайăк мар çав. Чунсăрскер.
Ку пулать вăл ... .
*(м.....к)*

Манпалан виçен ёлке,
Çухрăма шутлан хăш чух.
Çаврăнатăп эп ёлккен,
Мансăр сирĕн пурнăç çук.
*(р.л.т.а)*

Чи-чи теекен,
Кĕлт-кĕлт сикекен,
Чăпăркка тĕслĕскер,
Чăмăртан пĕчĕкскер.
Кайăк вăрă çиет,
Хĕл кунтах ирттерет.
*(ç...и)*



Йěплě унăн кěрěкě,
Шак-шак-шак! ури.
Пӳрчě çакă ...
Вăрманта пур-и?
*(ч...пěн)*

Вăл пулать тырăран,
Вăл пулать çăнăхран.
Çын çăрать чустине,
Çын лартать пěçерме.
Техěм шăршă пӳртре —
Вăл пиçсе тухсанах.
Кирлě çавă пире
Пурнăçра яланах.
*(ç...р)*

Шěлепкеллě çумăрта,
Шěлепкеллě шăрăхра,
Татнă хыççăн эс килте
Ăшалатăн çу çинче.
Типěтетěн хěл валли,
Каласам, мěн япали?
*(к...а)*



Пахчара чаватӑн эс унпа,
Тимӗртен вӑл, йывӑç авӑрпа.
*(к..е.е)*

Çын сыпать унпа ялан яшка,
Темӗн те çиетӗн ... .
*(к...к.а)*

Çывӑрать, çывӑрать хӳтӗре,
Çӗрӗпе вӑл чупать сунарта.
Ку чӗр чун пурӑнать, кур, килте,
Шӑшие хӑратма юратать.
*(к....)*

Пӗçерен котлет унран,
Пӗлӗмпе рагу тӑван.
Сучӑн, кӑлпасси, шӑрттан
Хатӗрлетӗн ... .
*(к...й..н)*



Çурçĕр Пăрлă тинĕсре,
Тайгара вăл пурăнать.
Юрататъ пулла сĕре,
Çырлана та тăрăнать.
Пылшăн касăхать ялан,
Шурă, хăмăр тумпалан.
*(у..)*

Кушак пек чиперскер,
Пысăкскер, уласкер,
Вăрманта пурăнать,
Зоопаркра курăнать.
*(л..п..д)*

Мăйраки çатрака,
Утă, улăм çиет.
Тундрăра чупакан,
Вăл çынсемшĕн ĕçлет.
*(п....)*



Ҫӗлемешкӗн кирлӗ хатӗр,
Тунӑ хурҫӑран ӑна.
Ҫӗвӗлетӗн йӗм те атӑ,
Шӑтарать вӑл сӑрана.
*(й..)*

Пӗлӗтрен пӗрӗхет,
Йӗпетет вӑл ҫӗре.
Ҫунӑ май иртӗхет,
... кирлӗ сӗре.
*(ç....)*

Ҫын ҫывӑрать —
Вӑл курӑнать.
Икӗ хут тӗлленмест,
Фильм мар — илтӗнмест.
*(т....)*

Вӑл вӗрет тухӑҫран,
Вӑл вӗрет анӑҫран,
Тӗрлӗ-тӗрлӗ енчен,
Вӑл ҫӳҫе сапалать,
Кӗпене те ҫӗклет.
Унпала япала
Сивӗре те типет.
*(ç..)*

Питӗ тутлӑ апат,
Ырӑ шӑршӑ кӗрет.
Эп сыпап кашӑкпа —
Ҫынсене вӑй кӗртет.
*(я...)*

Ăшăра, сивĕре
Кил-çурта вăл сыхлать.
Ай вĕрет, ай вĕрет,
Каласам, мĕн пулать?
*(й...)*

Кăпăшка-кăпăшка,
Çывăрма канлĕскер.
Ывăнмасть пуç унпа.
Тĕклĕ хатĕр мĕскер?
*(м.н.е.)*

Кĕске хӳре — пурнăçра
Кукленет, чĕтрет уйра.
Йывăç хуппине кăшлать.
Вăл мĕнне кашни калать.
*(м....ч)*



Пысӑк мӑйракаллӑ,
Сарлака ҫамкаллӑ.
Пурӑнать хӑй витере,
Ҫу ҫитсен тухать хире.
Сӗт парать, ҫу парать,
Вӑл пире тӑрантарать.
*(ӗ..)*

Выҫӑ чух шаккать шӑлне —
Выльӑха ҫиесшӗн,
Кайӑк кирлӗ хӑш чухне —
Хур юнне ӗҫесшӗн.
Сӑрӑ тӗслӗ вӑл ялан,
Пӗлмесен те ан кулян.
*(к.....)*



Вăл пулсассăн хĕртĕнеççĕ
Шăрăх кун çынсем пляжра,
Хăшĕсем шыва кĕреççĕ.
Çухалать вăл анăçра.
Ир пулать куллен унпа,
Йăлтăр-ялтăр кулăпа.
*(х....)*

Вăл анмасть тӳперен.
Те хăрать пирĕнтен?
Çĕрĕпе куç хупмасть,
Пĕр сăмах та хушмасть.
Асанне, кукамай
Евĕр хăй курăнать,
Аякра пирĕнтен,
Тӳпере пурăнать.
*(у...)*

Кăчăр-кăчăр касакан,
Çӳп-çап йышлă тăвакан.
*(п....)*

Шăтаратăп йывăçа,
Шăтаратăп кирпĕче,
Кирлĕ эп кирек хăçан
Çĕнĕ, хăтлă çуртсенче.
*(п...)*

**Тӗрлӗ пуҫ ватмӑшсем.**

Эп ҫупа пусса ҫиетӗп
Яланах ӑна.
Хыҫалти *Ӑ*-на *А* тетӗн —
Ҫапӑп хӑмана.
*(п..ӑ, п..а)*

Ҫичӗ чӑх, виҫ кӑркка —
Ман асаннен мулӗ.
Пур тата «мӑнтӑркка»,
Ашӗ унӑн ҫуллӑ.
Нарт-нарт тӑвакан
Кайӑкӗ те саккӑр.
Каласам, шутлакан,
Пур-и йыш вун саккӑр?

Ҫимӗҫе кӑшлать ... ,
Хӑпарать пӳрт тӑррине.
Шухӑ кайӑк «кӑлтӑркка»,
Саркалать хӑй хӳрине.
Ют ҫынна курсан вара —
Ыткӑнса чупать таҫта.

Мĕншĕн вăл пире тивет?
«Пиллĕк» илекен пĕлет.
*(к..к.а)*

**Акросăвă.**

**А** саттеçĕм турĕ алтăр
**С** арă-сарă йывăçран.
**А** вăрне ӳкерчĕ çăлтăр,
**М** ĕншĕн ăслă вăл манран?
**Ç** ын ĕçпе ăста пулать,
**Ă** вăс та, кур, чунланать.



## Кам пулас?

Піуласчĕ манăн, тусăмсем, геолог:
Мĕн чухлĕ çĕр çинче сăрт-ту та улăх,
Чĕр кĕмĕл, нефчĕ, ылтăн та уран,
Тăхланĕ, тимĕр, пăхăр — мăй таран.
Çанталăк пирĕн сивĕ, çил-тăманлă,
Тĕтреллĕ, шăрăх, çумăр-сăлпăранлă.
Е вăйлă çил вĕрет-и тинĕсрен,
Эп пурпĕр шикленместĕп ку ĕçрен.
Шырасчĕ никель, алюмини манăн,
Ку пурлăх питĕ кирлĕ-çке, тăванăм.

Пăхатăп пĕчĕкрен эп шкул енне,
Пуласчĕ ман учитель, Шураппаçăм.
Вĕрентĕп вак число, квадрат мĕнне,
Туятăп: кирлĕ çĕршыва шутлавçă.
Çук унсăр пурнăç халĕ пасарта:
Задачăсăр-примерсăр шутсăр йывăр.
Пĕлӳсĕр япăх салтака Çарта,
Шинелĕ те, атти те унсăр тăвăр.

# КАЛАВСЕМ

## Пылчăк.

Юр ирĕлет. Тинех кĕтнĕ çуркунне çитрĕ. Урамра шăнкăртатса шыв юхать. Тĕллĕн-тĕллĕн пылчăк та тухнă.

Пĕчĕк ачасем савăнăçлă: унталла-кунталла чупкалаççĕ, пĕрисем кимĕ юхтараççĕ, теприсем консерв банкипе шыв ăса-ăса пысăкрах савăта тултараççĕ.

Илюш хăйĕнчен кĕçĕнреххисем хĕпĕртесе вылянине чӳречерен курчĕ те васкаса урама чупса тухрĕ. Аллинче — патак.

Пĕчĕккисем ун патне пынă-пыманах вăл лапрана патакпа хыттăн çапрĕ те айккинелле тапса сикрĕ.

Ачасем — тăр пылчăк. Пăхма хăрушă. Пĕр таса вырăн çук. Илюш кăмăллăн кулкаласа çул айккинче пĕчченех вылям пекки турĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ — ун çумĕнченех пĕр çăмăл машина çил пек вĕçтерсе кайрĕ.

Илюш пичĕ-куçĕ хуп-хура. Ӳтне тикĕт сĕрнĕ тейĕн. Йĕм пĕççисенчен пылчăк юхать.

Камран пулăшу ыйтмалла?

Çынна усал тăвакан хăй те усал курать тесе ахальтен каламаççĕ пулĕ çав.

**тĕллĕн-тĕллĕн** — местами
**кăмăллăн кулкаласа** — довольно улыбаясь
**тикĕт** — дёготь

**Ыйтусене хуравла.**

Ачасем ăҫта выляҫҫĕ?
Илюш аллине мĕн тытнă?
Пĕчĕк ачасем мĕншĕн пылчăкпа вараланнă?
Илюш лайăх ача-и?



Калава вулăр та вырăсла куçарăр.

## Альтук аппа.

*Чăн пулни.*

Эпĕ шкулалла утатăп.

Акă Альтук аппа килет. Вăл килĕнче пĕчченех пурăнать, çулĕпе те çамрăках мар ĕнтĕ.

Тĕл пултăмăр.

— Альтук аппа, ăçта каятăн? — тетĕп.

— Качакана шырама тухрăм-ха.

— Сан хыçунта чупса пыраканни кам качаки эппин. Кур, епле хуп-хура, илемлĕ вăл, лăпкă.

— Ара, ман качака-çке ку! — тет Альтук аппа савăнса. — Хам выльăх хамах шырать. Ай тур-тур-тур!

Ăслă çын качаки те ăслă çав.

**Ыйтусене хуравла.**

Альтук аппа мĕн шырать?

Унăн качаки мĕнлерех? Тупса вула.

Ватă çын мĕншĕн хыçала çаврăнса пăхмасăр утнă?

Мĕншĕн автор Альтук аппана ăслă тет? Хăв шухăшна кала.

Çакă И.Я.Яковлевăн хăш кĕске калавне çывăх? Унăн калавĕнчи выльăх ятне аса ил.

**Ăслаккай.**

Генăн ашшĕ Çурçĕрте ĕçлет. Вăл унта вăхăтлăха кăна кайнă. Икĕ уйăхран каялла килмелле унăн.

Арçын ача ашшĕ патне çыру çырма ларчĕ. Мĕн тери илĕртет ăна тундра.

«Юратнă аттеçĕм, — пуçларĕ Гена хăйĕн çырăвне, — эпир аннепе чиперех пурăнатпăр, иртнĕ эрнере Атăл леш енче пултăмăр, тĕрлĕ çырла пуçтартăмăр. Сана питĕ кĕтетпĕр. Яла килнĕ чухне манăн юратнă палансене фотоаппаратпа ӳкерсе килсемччĕ, уншăн сана питĕ тав тăвăттăм. Гена».

Тинех кĕтнĕ вăхăт çитрĕ.

Гена ашшĕ, Владимир Петрович, — ялта. Алăкран кĕнĕ-кĕменех арăмне илемлĕ чечек çыххи, Генăна вара тĕлĕнмелле тăваткал япала тыттарчĕ.

Мĕн тери савăнăç! Анчах мĕнле картина ку? Йывăççем-и? Вĕтĕ хĕрлĕ çимĕçлĕ тата хăйсем. «Атте ӳнерçĕ-им манăн?»

Генăн кăмăлĕ тӳрех сӳрĕкленчĕ.

— Атте, эпĕ тундрăри мăйракаллă... — ача каласа пĕтерейменĕ.

— Эх, ăслаккай, эпĕ сан валли ыранах чăваш орфографи словарьне туянăп, вăл сана сăмахсене тĕрĕс çырма пулăшĕ, — терĕ ăшшăн кулса Генăна ашшĕ.

**палан** — калина
**пӑлан** — олень
**ӳнерҫӗ** — художник
**сӳрӗкленчӗ** — помрачнел

**Ыйтусене хуравла.**

Гена ҫырӑвӗнче сӑмах мӗн пирки пырать? Тепӗр хут вула.
Ашшӗ тундрӑран ывӑлӗ валли мӗн илсе килнӗ?
Гена мӗншӗн парнепе кӑмӑлсӑр?

**Ӗҫсем.**

Калавӑн тӗп шухӑшне палӑрт.
Палан йывӑҫҫипе пӑлана сӑнласа пар.



## Кăткăпа Лĕпĕш.

*Юмах.*

Пурăннă тет Кăткăпа Лĕпĕш. Вĕсен кашнин хăйĕн çурт пулнă. Кăткă килне питĕ типтерлĕ тытнă, вăл ир пуçласа каçчен ĕçленĕ: пăта та çапнă, урайне те çума ўркенмен.

Лĕпĕш вара вăхăтне усăсăр ирттернĕ, тăтăшах тусĕсем патне хăнана кайнă, шукăль тумĕпе савăнса çўренĕ. Унăн килĕнче пачах ĕçлес килмен. Пурăнсан-пурăнсан Лĕпĕш çурчĕ йĕри-тавраш̆енче тем чухлĕ çўп-çап пуçтарăнса каять — утма вырăн çук.

Кĕçех хура çумăр пĕлĕчĕсем шуса тухаççĕ, йăлтăр-ялтăр çиçĕм çиçме тытăнать. Лĕпĕш çуртне самантрах вут хыпса илет, пўрт таврашĕнчи çўп-çап çулăмпа çунма тытăнать. Ниепле те сўнтерме май çук.

Лĕпĕш çурчĕ тĕпĕ-йĕрĕпе çунса кайнă тет. Ун инкекĕ пирки Кăткă пĕлет. Вăл Лĕпĕш патне пырать те:

— Лĕпĕш тусăм, ан куллян, — тет. — Куç ман пата пурăнма. Килĕм пĕчĕк пулсан та пире пурăнма çитет. Акă ал шăлли, супăнь, шăлна тасатма пултаратăн. Ирсерен иксĕмĕр тулта ĕçлĕпĕр, кайран япаласене çăвăпăр. Пушартан сыхланма шыв катки те лартса хурăр.

Çавăнтанпа Лĕпĕшпе Кăткă туслă пурăннă тет. Вĕсен пахчи те, картишĕ те, çурчĕ те яланах таса пулнă тет. Урăх пушар тухас хăрушлăх пулман.

**Ыйтусене хуравла.**

Кăткă еплерех кăпшанкă пулнă? Ун пирки калакан йĕркесене тупса вула.
Лĕпĕш килĕшрĕ-и сана? Мĕншĕн?
Пушара сӳнтерме мĕншĕн çăмăл пулман?
Санăн Кăткă пек пулас килет-и?

**Ĕçсем.**

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш абзацсене вырăсла куçар.
Юмах содержанине кала.

**Çак ваттисен сăмахĕсене асра тыт.**

Кайăк хитре тĕкĕпе, этем — ырă ĕçĕпе.
Тус инкекре курăнать.



## Барбос.

Барбос паян пĕрчченех. Хуҫапа арăмĕ ирех пасара тухса кайрĕҫ. Йытта апат панă чух хыттăнах: «Асту, киле ют ҫынсене ан кĕрт!» — терĕҫ.

Барбос ăслă йытă: ялти пур выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке, ҫынсене тĕпĕ-йĕрĕпе паллать. Ун патне кӳршĕсен кушакĕ те пырса кĕреймест.

Сасартăк урамра: «Мур кушакĕ, кама кирлĕ пуль сан ҫурусем! Кайăр кунтан пурте, тăранман хырăмсем!» — тени илтĕнчĕ.

Адолина (кушака ҫапла чĕнеҫҫĕ) икĕ ҫурине черетпе Барбоссен карти умне пырса хучĕ. Хăй те юнашар вырнаҫрĕ. Хырăмĕ выҫнă унăн, чăтма ҫук ҫиес килет. Барбос паян тутă, ăна кунĕпе ҫимелĕх апат парса хăварнă: ҫăкăрĕ те, яшки те ҫителĕклĕ. Вăл кушака карта айĕнчен пăхрĕ, хурлăхлăн йынăшса ячĕ.

«Адолина, ман пата кĕрĕр, ан хăрăр» тени пулчĕши ҫакă?



Ун хыççăн Барбос çĕре урисемпе чавалама пуçларĕ. Тăпрана сирпĕтет кăна.

Кĕçех карта айĕнче кушаксене картишне кĕмелĕх шăтăк пулчĕ.

Адолина хăюсăррăн Барбос апачĕ çине пăхса илет. Пĕччен мар вĕт-ха вăл, çурасен те çиес килет, вĕсем аванах ӳснĕ, амăш сĕчĕпе кăна пурăнаймаççĕ.

Барбос яшка савăтне сăмсипе тĕртме тытăнчĕ, йăви умĕнчен чылай куçарчĕ. Халĕ апата ирĕккĕнех çиме пулать. Юлашкинчен йытă çăкăр татăкне те çăварĕпе хыпса илсе савăт патнелле илсе пычĕ.

Апат çисе тăраннă хыççăн кушак çурисем выляма тытăнчĕç. Амăшĕн хӳрине çырткаланçи турĕç, унтан Барбос умне пырса выртрĕç.



**Ыйтусене хуравла.**

Адолинăпа çурисен хуçисем пур-и?
Барбос мĕнле чĕр чун?
Эсĕ килсĕр кушаксемпе йытăсене шеллетĕн-и? Мĕншĕн?

**Ĕçсем.**

Ăнланман сăмахсене словаре çыр.
Калаври уйрăм шухăшсене вырăсла куçар. Ĕçе пурте хутшăнма тăрăшчăр.
«Кушакпа йытă пек харкашса пурăнаççĕ» тени тĕрĕс-и? Хăв шухăшна кала.
«Кушакпа йытă — манăн туссем» темăпа ачасемпе калаçу ирттерĕр.



## Мана пула.

Атте ёҫе каяс умĕн мана килте пулма хушса хăварчĕ. «Ачам, ниҫта та ан тух, чăх чĕпписене сыхла, апат ҫитер», — терĕ.

Эпĕ атте алăка хăй хыҫҫăн хупсанах урама тухса вĕҫтертĕм. Кунĕпе ачасемпе лапталла вылярăм, каҫхине кăна кил ҫинчен аса илтĕм.

Аттепе хапха умĕнче тĕл пултăмăр. Вăл эпĕ ăҫта пулнине тӳрех чухларĕ пулас:

— Ну, Ҫеруш, малашне сана ёҫе ярăп, хам чăх чĕпписене пăхăп, — терĕ.

Мана пула икĕ чĕппе курак йăтса кайнă иккен.

Атте-анне сăмахне яланах итлемелле ҫав.

**Ыйтусене хуравла.**

Ёҫе каяс умĕн ашшĕ ывăлне мĕн тума хушса хăварнă?

Ача вăл каланине пурнăҫланă-и?

Чăх чĕпписемпе мĕн пулса иртнĕ ҫав кун?

**Ĕçсем.**

Калав содержанине уйрăм хут çине вырăсла çыр.
*Сыхла* глагола хальхи вăхăтра çырмасăр сăпатла.
Атте-анне сăмахне яланах итлемелли çинчен ачасемпе калаçăр.
Хăв тунă пĕчĕк йăнăшсене аса ил.

## Кĕтмен парне.

Володя пиччĕшĕ Мускавра вĕренет, вăл студент. Çур çулта пĕрре яла килсе каять: ашшĕ-амăшĕпе юратнă шăллĕне курас килет унăн. Ху çуралса ӳснĕ вырăна мĕнле таврăнмăн-ха.

«Пиччене Мускавран мĕн илсе килме ыйтса çырасши? — шутларĕ Володя çыру çырма ларнă чух. — Тен, интереслĕ кĕнеке илме ыйтас? Е купăс?..

Тинех шутласа тупрăм! Ăна илсе килсен чăн-чăн савăнăç пулать маншăн...»

«Пиччеçĕм, мана валли тĕрлĕ-тĕрлĕ сăра туянсамччĕ, пĕр ĕç тăвасшăн эпĕ. Салампа Володя», — тесе çырнине вуласанах пиччĕшĕ Серёжа тӳрех апат-çимĕç магазинне чупрĕ. Туянчĕ кирлине.

Володя, ӳнерçĕ пулма ĕмĕтленекенскер, ашшĕне картинăсем валли илемлĕ рамăсем тутарчĕ.

Арçын ача ӳкерме ăста, тĕрлĕ сăрă кирлĕ ăна.

Икĕ талăкран Серёжа яла килсе çитрĕ. Ашшĕ валли вăл столяр инструменчĕсем, амăшĕ валли — хитре шарф, Володя валли вунă бутылка тĕрлĕ сăра туяннă. Этикеткисем куçа шартараççĕ, тăван республи-

ка заводӗнчен тухнисем те пур. Тӗлӗнтермӗш мар-и вара?..

Ҫакӑн хыҫҫӑн Володя чӑваш чӗлхине тӑрӑшса вӗренме пуҫларӗ.

**Ыйтусене хуравла.**

Володя пиччӗшӗ ӑҫта вӗренет?
Володя ҫырӑвне тӗплӗн тепӗр хут вула. Вӑл пиччӗшне
Мускавран мӗн илсе килме ҫырать?
Сӑрӑ ӑсти пулма арҫын ачана мӗн чӑрмантарнӑ?
Серёжа парнине курсан шӑллӗн кӑмӑлӗ мӗншӗн хуҫӑлать?

**Ӗҫ.**

Ҫак евӗрлев сӑмахӗсен пӗлтерӗшӗсене ҫирӗплет:

| | |
|---|---|
| пӑр-пар | тӑн-тан |
| тӑр-тар | хӑр-хар |
| мӑн-ман | сӑр-сар |
| шӑн-шан | кӑл-кал |



## Выльăх та чунсăр мар.

Пирĕн килте ула кушак пур. Виçĕ тĕслĕскер хăй. Эпир ăна питĕ юрататпăр.

Боря кушак кăнтăрла çывăрать, каçхине пирĕнпе выляма пуçлать: урайĕнче тетте хыççăн чупать, пĕчĕк шăллăм çине сикет.

Пĕринче эпĕ асăрхамасăр Боря ури çине пусрăм. Кушак макăрса ячĕ те уксахла-уксахла диван хыçне кĕрсе кайрĕ. Шăллăм савăннипе ахăлтатса кулса ячĕ.

— Выльăх-чĕрлĕхе хĕрхенме пĕлмелле, — терĕм эпĕ.

Нумаях пулмасть шăллăм ăнсăртран алăкпа пӳрнине хĕстерчĕ, куççульпе йĕрет. Юрать-ха чĕрни ӳкмерĕ.

Çавăн хыççăн вăл пур чĕр чуна та шеллекен пулчĕ, кушакран та урăх кулмарĕ.



**Ыйтусене хуравла.**

Боря мĕн тĕслĕ?
Вăл вăхăта епле ирттерет?
Выльăх-чĕрлĕх е çын инкеке лекнине курсан, ачасем, эсир хăвăра мĕнле тытнă пулăттăр?

**Ĕçсем.**

Калава вырăсла куçар.
Ăна мĕншĕн çакăн пек ят панине кала.

## Инкек — çурмалла.

Коля умĕнче пысăк сумка йăтнă ватă асанне утса пырать. Йывăр çĕклемне çĕр çине лартса канакана илет.

Арçын ача, ăна асăрхаманçи пулса, малаллаваскарĕ. Çул урлă каçсанах Коля такăнса ӳкрĕ, чĕркуççинчен юн юхма пуçларĕ. Ăна хĕрхенекен те пулмарĕ.

«Эх, мĕншĕн асаннене пулăшмарăм-ши, — шухăшларĕ Коля ăшĕнче. — Ку инкек те сиксе тухман пулĕччĕ».

**Ыйтусене хуравла.**

Кинеми мĕн йăтса утать?
Коля ватă çынна асăрханă-и?
Вăл ăна мĕншĕн пулăшма васкамасть?
Эсĕ ватăсене пулăшатăн-и?

## Урокра.

Эпĕ Верăпа пĕр класра вĕренетĕп, пĕр парта хушшинче ларатăп. Вырăс чĕлхи кĕнекине урока черетпе илсе килетпĕр эпир: пĕринче — эпĕ, тепринче — вăл. Юн кун Вера чирлесе ӳкрĕ, шкула килмерĕ.

Эпĕ пĕчченех ларатăп.

Валентина Васильевна урокра тĕрлĕ вăйăсем выляттарчĕ, хăнăхтарусем çыртарчĕ, правилăсем калаттарчĕ.

Кĕнеке çуккипе эпĕ çырмасăр лартăм, урокра «иккĕ» паллă илтĕм. Çакăн хыççăн уроксенче кирлĕ кĕнекесене пурне те чиксе çӳрекен пултăм.

Ӳркев ӳкерет, кахал пăсать тесе ахальтен каламан çав.



**Ыйтусене хуравла.**

Эсӗ уроксенче усӑ куракан кӗнекесене яланах чиксе ҫӳретӗн-и? Кӗнекесӗр мӗншӗн вӗренме йывӑр?

**Ӗҫ.**

«Кӗнеке — манӑн ҫывӑх тус» темӑпа калаҫу ирттерӗр.

Шӳте рольпе вулӑр.

## Шӳт.

Вӗрентекен:
— Толя, кала-ха, чӑхӑн миҫе ура?
— Пӗрре.
— Мӗншӗн сахал? Эсӗ чӑхсем утнине нихӑҫан та курман-им?
— Пирӗн чӑх хӑрах ура ҫинче тӑратчӗ те...

Шӳте малтан чӑвашла, унтан вырӑсла сӳтсе явӑр.
Ҫакӑн евӗр шӳте килте ҫырса кил.



# ТУПМАЛЛИ

Хисеплӗ вулаканӑм! *3*

**Литература вӑййисем**

Сӑвӑ пусӑмӗпе састашлӑхне (ритмпа рифмӑна) туймалли хӑнӑхтарусем *5*
Хӑвӑрт каламаллисем *10*
Шарадӑсем *15*
Метаграммӑсем — Логогрифсем *16*
Анаграмма — Пӗр сас паллирен пуҫланакан кӗске текстсем *17*
Тупмалли юмахсем *18*
Тӗрлӗ пуҫ ватмӑшсем *26*
Акросӑвӑ *27*
Кам пулас? *28*

**Калавсем**

Пылчӑк *29*
Альтук аппа *31*
Ӑслаккай *32*
Кӑткӑпа Лӗпӗш *34*
Барбос *36*
Мана пула *39*
Кӗтмен парне *40*
Выльӑх та чунсӑр мар *42*
Инкек — ҫурмалла *43*
Урокра *44*
Шӳт *45*

*Литературно-художественное издание*

Для детей младшего и среднего школьного возраста

**Любовь Михайловна Федорова**

**ПĔЛӲ ÇĂКĂР ЫЙТМАСТЬ**

**ЗНАНИЕ — СИЛА**

***Литературные игры***

На чувашском языке

Художник *С.В. Самсонов*
Редактор *О.Л. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *Н.П. Печникова, А.Г. Владимирова, З.И. Гаврилова*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 953003.
Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 11.06.04. Формат 70x90 1/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 3,51 . Учетно-изд. л. 2,03. Тираж 2000 экз. Заказ № К-4556. Изд № 20 .

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12б.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Любовь Федорова**

Ф 33 Пĕлӳ çăкăр ыйтмасть: Литература вăййисем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 46 с.

Ку кĕнеке чăваш чĕлхине пуçласа вĕренекенсем валли уйрăмах усăллă. Чĕлхе илемне туйма пулăшакан, чăвашла тĕрĕс калаçу чĕлхине аталантарма май паракан тĕрлĕ хаваслă та кăсăк ĕçсемпе питĕ пуян вăл.

**УДК 821.512.111 — 93**
**ББК 84 (2Рос=Чув)—6**

**ISBN 5-7670-1328-4**

20-90

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2004